ÇЕÇПĔЛЬ МИШШИ

# СĂВĂСЕМ

ГОСИЗДАТ • 1939

ÇЕÇПĔЛ МИШШИ

# САВĂСЕМ

Чăваш АССР Государство Издательстви
Шупашкар • 1 9 3 9



## ХӖВЕЛЛӖ ПУРНӐҪ ЮРӐҪИ

Ман чӗрере уяр ури,
Хӗвел ури, хӗвел юрри.
*Ҫеҫпӗл Мишши.*

Уяр та симӗс ҫанталӑкра тӗлӗрсе ларакан вӑрман сӑнӗ ӳкнӗ Шуратӑл хумӗсем ҫинче хӗвел урисем вана-вана йӑлкӑшаҫҫӗ. Шупка ҫунатлӑ чарлансем унта та кунта ҫуйӑхаҫҫӗ. Прахут Хӗрлӗ-ҫыран ялӗ патӗнчен иртет. Епле асран кайми мухтавлӑ вырӑнсем! 1919 ҫулта юмахла мухтавлӑ Чапаев дивизийӗ ҫакӑ ялта канаш тунӑ, пӗренесенчен сулӑсем туса тепӗр ҫырана каҫнӑ, вутхӗмлӗ вӑйпа ҫапса Колчак адмирал ҫарне Ӗпхӳ хулинчен сирпӗтнӗ. Аслӑ ҫӗршыв ывӑлӗсенчен хӑшпӗрисем малашнехи хӗвеллӗ пурнӑҫшӑн, пирӗн пысӑк телейшӗн ҫакӑнта пуҫӗсене хунӑ, вӗсен шӑммисем ҫинче халӗ кӑвакарчӑн пек кӑвак

тĕслĕ тулă калчисемпе кăвăлти сассиллĕ вăрмансем шавлаççĕ, шыва путнисем çийĕнче пĕлĕт сăнлă кăтра хумсем ўхĕрсе сикеççĕ. Çак вырăна пăхсан, Ĕпхў таврашĕнчи тĕмескесене асăрхасан, питĕ паллă сăвă йĕркисем аса килеççĕ:

Хирте пĕр тĕмеске пĕр пĕччен.
Тăпри çине пуснă вĕлтĕрен.
Вилнĕ çын тăпри вăл—çак тăпра.
Ырă çынни вилнĕ вăрçăра.
Ĕç ачи вăл. Çĕнĕ пурнăçа
Сыхласа вилнĕ вăл çапăçса.
Чухăнсемшĕн—хăйĕн кунçулне,
Çамрăк ĕмĕрне вăл хĕрхенмен,
Коммунизм хĕрлĕ ялавне
Чун тухиччен çĕре ўкермен...

Çакна чăвашсен ĕмĕрлĕхе хисеплĕ поэчĕ, пирĕн халăхăн социализмла культурин ĕçчен çынни, ырма-канма пĕлмен хисеплĕ юрăçи Çеçпĕл Мишши çырнă. Вăл—чăваш совет поэзине пуçласа яракансенчен пĕри, тўрĕ кăмăллă, вĕри чунлă патриот. Вăл—чăваш халăхĕ аслă коммунистсен партийĕн тивлечĕпе ирĕке тухса чăн-чăн пысăк тивĕçлĕхсем илни çинчен юрлакан поэт.

Çеçпĕл Мишши пултарулăхне тĕплĕн-йĕрлĕн ăнланас тесен, революцичченхи чăваш литератури çине çаврăнса пăхни кирлĕ.

Малтанхи поэт Михаил Федоров «Арçури» поэминче тĕксĕм те йывăр саманари ĕнтĕхсе

çитнĕ хресчен пурнăçне ÿкерсе парать. Вулакансемшĕн паллă Хĕветĕр пĕрмаях сехрине хăпартса çÿрет,уншăн хирти пĕччен тунката та кашкăр-кашаман пек курăнать, кашни утăмрах йĕрĕх сиксе тухма пултарать. Хĕветĕр хăйĕн вăрăм та хĕсĕк кунçуллă ĕмĕрĕнче аякка кайса çÿремен, халăх калашле: «Атăл урлă каçман—атă тăхăнман». Çавăнпа ун пурнăç ытамĕ те чухăн.

Çул картлашкинче çуркунне йăвăç шăтса малтанхи çулçисене сарать. Урапасем иртеççĕ, унăн çамрăк пÿне ватаççĕ, ăна тикĕтпе варласа хăвараççĕ. Хĕветĕр те хаяр патша саманинче çав йăвăç вырăнĕнче пулнă. Хĕветĕре кунçул лутăркана, пурнăç ăна хĕненĕ, анкă-минке кăларнă. Вăл тăр-кăнтăрла аслă хĕвел айĕнче çÿреме те шикленеть:— унăн мĕскĕнлĕхне никам та ан куртăр, йытă вĕрнипе çурăлакан сăхманне пĕр шăлйĕрен куштан та ан асăрхатăр, çавăнпа та вăл çĕрле кăна çÿрет, мулкач пек пытанать; унăн ял çинче çÿрекен ячĕ те хисепсĕр—«Хĕвел ансан Хĕветĕр» тенĕ ăна. Ун пек кăмăла хуçакан ятсем-хушаматсем ĕлĕкхи ялта нумай пулнă... Анчах ĕлĕкхи тĕттĕм чăваш ялĕнче те хăравçă та мĕштĕркке «Хĕвел ансан Хĕветĕрсем» кăна мар пулнă, пусмăртан хăтăлас ĕмĕтпе çĕкленнĕ паттăрсем те чылай пулнă. Ун пеккисенне патша тÿре-шари «ан

калаçтăр» тесе чĕлхисене кастарнă, вĕсене пуçилле каторгăсене ăсатнă, е вĕсен виллисем хура юпасем çинче çилпе силленсе тăнă. Халăх хăйĕн юрринче: «Хусан çинче хут вылять, Чĕмпĕр çинче чĕн вылять»—тенĕ. Çакă вирлĕн янтăракан сăмахсенче кӳтсе çитнĕ халăхăн хаяр çилĕллĕ юнавĕ сисĕнет. Ç. Элкер поэтăн «Хĕнхур айĕнче» поэминчи Чаккапа Хĕветĕре танлаштарса пăхар. Вĕсем иккĕш те чухăн, анчах вĕсем хушшинче пит те пысăк уйрăмлăх выртать. Мĕскĕн Хĕветĕр Ителмес ялĕнчен инçе кайман, пусмăрлăха хирĕç харсăррăн тăрас пирки тĕлленмест те, унăн пĕтĕм шухăшĕ те тӳшек çинче лăпкă вилĕмпе вилесси, анчăк çӳри мар тесе хăйне масара тăванĕсемпе юнашар пытарттарасси. Вăл хăй этем пулса çуралнишĕн те ӳкĕнет, унăн хăрăк йăвăç туратти пулса ӳкесчĕ те çурхи шывпа юхса каясчĕ, вара «Энтрикантри» пек этемсенчен пулнă арçурисенчен те шикленесси пулмĕччĕ, хăранипе алчăранă куçĕ умĕнче усал вăйă вылямĕччĕ, çырмаран сиксе тухмĕччĕ, пĕккине те çурмаран хуçмĕччĕ... Хĕветĕр вăйсăр. Чакка та малтанах Хĕветĕр пекех имшеркке. Каярахпа, Алапит ывăлĕшĕн салтакра хăшкăлса килнĕ хыççăн, хăйĕн телейсĕрлĕхĕ ăçтан тухса кайнине сиссе илет, хăй чăн-чăн этем пулмаллине, муллă харампырсем умĕнче пуç усса тăма пă-

рахма кирлине ăнланать. Чакка пек, пурнă-çа урлă-пирлĕ касса тухнисем, паллах ĕнтĕ, Хĕветĕр ялĕнче те пулнă, «Арçури» поэмăн пуçламĕш сыпăкĕнчех:

**Лавраç пичче лава кайнă,**
**Салтак ачи пама кайнă,—**

тет Федоров. Анчах ăна сарлакан кăтартса панине курмастпăр. Кунта Федорова айăпла-са чăркăша кĕме çук, мĕншĕн тесен поэт хă-йĕн ĕмĕрĕнче хăй çырнисенчен пĕр йĕрке те пичетлеймен, ăнсăртран кăна çак поэмăн пĕр татăкĕ пирĕн телейшĕн тăрса юлма пултарнă. Сăмах май каласа хăварас килет: Федоров чăваш литератури историйĕнче хисеплĕ вы-рăнсенчен пĕрне йышăнать, ăна хăйĕн тĕлĕн-мелле ăсталăхĕ тĕлĕшĕпе илсен, Ивановпа пĕр танах тăрать, тесен те ытлашши пулмĕ.

Этем тени хăватлă. Иванов калашле:

**Çакă çутă тĕнчере**
**Вăйли те çук этемрен:**
**Шывсем çинче, çĕр çинче**
**Хуçа пулса вăл тăрать.**

Анчах пусмăр саманинче этемĕн хакĕ çук, вăл чунсăр тавар пекех шутланать... «Хĕ-вел ансан Хĕветĕр» çав хаксăр саманара мĕс-кĕнленсе пурăннă, вăл ăна хирĕç тăма хă-яйман. Чакка та çав саманарах пурăннă, ан-чах та Хĕветĕр пек мар,—урăхла. Пусмăрлăх-па, мăшкăлпа Чакка ниепле те килĕшме пул-

тарайман, вăл ăна хирĕç пăлханна, хăйĕн чăн-чăн паттăрлăхне кăтартнă,—вăл канăçсăр чĕрине хаяр кĕрешĕве парать, вилессе те «Ителмес» тавраш̆енче мар, тӳшек çинче ге мар, «Чĕмпĕр çинче чĕн вылякан» вырăнта, аслă Атăл хĕрринче, шур çунатлă ирĕк чарлансен сассине итлесе вилет. Ку вилĕм хисеплĕ.

1905—07 çулхи революци поэчĕ Тайăр Тимкки, ахальтен мар ĕнтĕ, пурнăçне халăх ĕçĕшĕн паракан çын вилĕмне «чаплă вилĕм юрри»—тенĕ. Ĕлĕкхи ялта Хĕветĕр пек хĕвелсĕр пурăнакансем нумай пулнă,—Михетерсем пек, Алапитсем пек çĕрме пуянсемшĕн кăна пурнăç хĕвеллĕ тăнă. Аслă Октябрь революцийĕ çеç пĕтĕм халăхшăн хĕвел илсе килчĕ. Унччен хи чăваш литературине илсен, эпир нихăçан та хăйсен телейне тупайман геройсене куратпăр. Силпири Сетнер хăй савнă Нарспипе пĕрле пурнасшăн çунать, унăн пĕтĕм телейĕ те çавăнта тăрать. Анчах Сетнер чухăнлăхĕ çак икĕ юратнă чун хушшинче тĕпсĕр çырма пекех выртать, вĕсене пĕрлешме чарать. Сетнер илемлĕ, çапах те вăл лаптăк сăмсаллă ватсупнă Тăхтаманпа танлашма пултараймасть, мĕншĕн тесен лешĕ муллă пуян, Сетнер чухăн пулнă.

Социализмла революци çеç чухăнсене хисеп пачĕ, пĕтĕм халăха чăн-чăн хĕвеллĕ çул

çине кăларчĕ. Çакă аслă тивлетлĕ самана çуралсан тин темиçе ĕмĕр хушши хĕнхурлăх çинчен юрланă чăваш халăхĕн хăлхинче илемлĕ, янăравлă сăвăсем илтĕнме пуçларĕç... «Иртнĕ самана» ятлă сăвăра ирĕке тухнă Хĕветĕрсене чĕнсе çапла каланă:

**Ватă аслаçу пўртне**
**Йăвантарса яр,**
**Ĕмĕрлĕх никĕс çине**
**Çĕнĕ çурт лартар!**
**Пур чухăнсем тĕнчине**
**Вăл çурта тăвар,**
**Йăлтăр хĕвел çуттипе**
**Тăррине тăрлар.**
**Вăхăт пулĕ, вăхăт çитĕ,**
**Çĕн йĕрке килсен,**
**Юхмĕ, юхмĕ тек куççулĕ**
**Пурнăç хĕсĕкрен!**
**Çĕнĕ пурăнăç хĕвелĕ**
**Çунĕ çутатса.**

Çакă хăватлă йĕркесене 1919 çулта кăвар чĕреллĕ Çеçпĕл Мишши çырнă. Хăшпĕр чухне çĕрлехи пĕлĕтре вут-хĕм сирпĕтекен метеорсем калама çук хăвăрттăн ялкăшса иртеççĕ, анчах вĕсен алхапăлта куç умĕнчен иртсе çухалнă çутă сăнне нихăçан та манаймастăн. Çеçпĕл Мишши те чăваш совет литературинче питĕ кĕске вăхăтрах, 3-4 çул хушшинче, хăйĕн хăватлă пултарулăхне кăтартса хăварчĕ, пысăк таланчĕпе ĕмĕр асран кайми паха сăвăсем çырса пирĕн çамрăк поэзине

çӳллӗ пусăма çӗклерӗ. Вăл революци ăшшипе хăпарса тухнă чăваш поэзинчи малтанхи чечек. Паллах ӗнтӗ, вăл хăйӗн пултарулăхне пуçласа яма çеç ӗлкӗрнӗ, алăк çеç уçнă,—анчах та малалла парас сăвă-юррисем пирӗн хăлхана лекмесӗрех çӗре кӗнӗ.

Çеçпӗл Мишши (Михаил Кузьмич Кузьмин) Чăваш республикинче, Канаш районӗнчи Касак-касси ялӗнче, 1899 çулти ноябрӗн 18-мӗшӗнче çуралнă. Çеçпӗл Мишши пурнăçӗ мӗн пӗчӗкренех пур енчен те ăнăçсăр пынă. Ытла та чухăн пурăнни çумне килӗнчи хирӗçӳсем хутшăннă, çамрăк ачан час-часах ӳсӗр ашшӗн патакне те çимелле пулнă. Ашшӗ, урăлайми ӗçке ерсе кайнине пула, пыра-киле ăс-хакăлӗ енчен те аташа пуçланă, вăл 1912 çулта Çеçпӗл мучăшне пуртăпа касса вӗлернӗ те 12 çуллăха каторгăна лекнӗ. Унччен те Çеçпӗлсен килйышӗнче урăм-сурăм харкашусем пулса пынă, ашшӗ—амăшне тата ачисене хӗненӗ, хушăран çемйине çăкăрсăр выçă лартнă. Çакă инкеклӗ ӗçсем тавра ялта усал сăмахсем сарăлнă, вăрăм чӗлхеллӗ йӗкӗлти çăварсем мӗскӗне юлнă ачасенчен тăрăхлама та ӳркенмен, хăшпӗр тантăшӗсем Мишшаран «катăршнăй ачи» тесе пăрăннă. Ачалăх çулӗсене куллен çакăн пек кăмăла хуçакан условисенче ирттернӗ Çеçпӗл пӗчекренех чирлӗрех пулнă, вăл хăвăртах хурланнă, хăвăртах та-

рӑхма та пултарнӑ тата ытти ҫынсенчен илтекен сӑмахсене хӑйӗн ӑшӗнче тӗплӗн тишкӗрме вӗреннӗ. Ашшӗсӗр юлнӑ пӗчӗкҫӗ Ҫеҫпӗле тантӑшӗсемпе пӗрле вӑйӑ-кулӑсенче пулма, шухӑшсӑр та кулянмасӑр пурӑнма тӳрӗ килмен, унӑн кӗтӳ хыҫҫӑн та чӑпӑркка йӑтса ҫӳремелле пулнӑ.

Ҫакӑ тискер пурнӑҫран сиксе тухма, чӑнчӑн этем ӗретне кӗме Ҫеҫпӗле хӑйӗн пысӑк ӑс-тӑнӗ пулӑшнӑ. Вӑл ялти шкулта саспаллисемпе паллашса ҫитсенех кӗнекесем вулама тытӑннӑ, каҫхинехи пушӑ вӑхӑтсене шӑши куҫӗ пек мӑчӑлти краҫҫин ламппи умӗнче кӗнекесемпе ирттернӗ. Ку вӑхӑт, Ҫеҫпӗл килйышӗшӗн кӑна мар, пӗтӗм халӑхшӑн ӗмӗр асран кайми йӑвӑр тапхӑр пулнӑ,—унчухне тӗнче вӑрҫи пынӑ. Ҫамрӑк та вӑйпитти ҫынсем вӑрҫа ӑсаннӑ. Тӑлӑха юлнӑ арӑмсем, вӗсен ачи-пӑчисем ӗсӗклесе макӑрнӑ. Ахальтен мар ӗнтӗ Ҫеҫпӗл ҫакӑн хыҫҫӑн чӗресене ҫунтаракан сӑвӑсем ҫырнӑ, чӑваш литератури историне „кӑвар чӗре“ тенӗ ят илсе кӗрсе юлнӑ.

Ялӗнчи пуҫламӗш шкула пӗтернӗ хыҫҫӑн, вӑл Шӑхасанти икӗ класлӑ шкула кӗрет. Вулама юратакан ачашӑн тинех аслӑрах ҫул уҫӑлнӑ. Ку вӑхӑтра ӗнтӗ вӑл ирӗклӗ вӑхӑтсене кӗнекесем ҫинчех ирттернӗ тата сӑвӑсем те ҫыркаланӑ. Унта вӑл пӗрмаях алӑпа ҫыракан „Ҫӑлтӑр“ ятлӑ журналӑн редакторӗ пул-

са ĕçленĕ, журналне хăех ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ. Илемлĕ литература ĕçĕ ăна çав тери кăмăлне кайнă, вăл унта çырса тăма вĕренекенсенчен чи пултараканнисене пĕрле ĕçлеме чĕннĕ. Лайăхрах çыракансене хăйĕн ӳкерчĕкĕсене парса парнеленĕ. Çеçпĕл ачасем хушшинче илемлĕ литературăна вĕренессине хăпартасшăн çуннă. Ун çинчен пире „Çăлтăр" журналта тухнă пĕлтерӳсем те ĕнентереççĕ; вăл унта вулама юратакансене хăйĕн кĕнекисене илме сĕнет, хăйĕн тивлетлĕ талантне палăртать. Çак вăхăтрах вăл чăвашла та вырăсла та сăвăсем çырма пуçлать, чылаях ăста рисункăсем тăвать. Ун чухнех вырăс литературипе тата пĕтĕм тĕнчери литературăпа лайăх паллашать. Вĕсене вăл ахаль йăпанма кăна вуламан, вăл литература техникин ăсталăхĕсене тишкĕрнĕ. Çеçпĕл вырăс литературинчи тĕрлĕрен юхăмсене те витĕр асăрхаса тăнă, çакăн çинчен унăн çырăвĕсенче асăннисемех пĕлтереççĕ. Çакăн пек пикенсе вĕренни Çеçпĕле пулас чăваш литературинче пысăк вырăн йышăнма майсем панă, унсăрăн вăл чăваш поэзинче çĕнĕ тапхăр уçайман пулĕччĕ,—тоника системи пуçланса кайни унăн ячĕпе çыхăнман пулĕччĕ.

Çеçпĕл 1917 çул кĕркунне Тетюш хулинчи учительсен семинарине кĕрет. Йăвăр пурнăça хăйĕн ĕнси çинче тӳссе ирттернĕ çамрăк

поэт телейлӗ пурнӑç социализмла революци урлӑ йӑлкӑшса килнине пӗтӗм чунӗ-чӗрипе сиссе тӑнӑ, ку революци уншӑн ӗмӗр-ӗмӗрех сӳнми „кӑвак хуппи“ вырӑнне пулнӑ. Çав çулах вӑл коммунистсен партине кӗнӗ. Партие кӗни уншӑн яланах çутӑран та çутӑ вӑхӑт пулса юлать. 1920 çулти ноябрӗн 18-мӗшӗнче (хӑй çуралнӑ кун) вӑл дневникӗнче: „Шухӑшсем хӑватлӑ! Эпӗ —коммунист!“—тесе çырса хурать. Çамрӑк поэт ӗмӗтне малашне тӑван халӑхӗ чӗрӗлсе тӑрасси, наци культури чечекленесси илӗртнӗ. Унӑн умӗнче çап-çутӑ çул выртнӑ. Чӑвашсен малтанхи чаплӑ поэчӗ Константин Иванов тӗрме пекех туйӑннӑ Чӗмпӗр шкулӗнче 1907 çулта, хӑй 18 çулта чухнех, çамрӑклӑхӗ иртни çинчен çапла ерлӗклӗ йӗркесем çырнӑ:

**Асап килсен, хӗн килсен**
**Шухӑшласа ларатӑп:**
**Çамрӑк вӑхӑт, ыр вӑхӑт,**
**Ӑçта эсӗ çухалтӑн?**
**Çамрӑк кунсем, ыр кунсем**
**Иртсе кайрӗç тӗлӗк пек.**
**Асап, хӗн-хур халӗ пур,**
**Килчӗç хура пӗлӗт пек.**

Çӗнӗ самана ывӑлӗ—Çеçпӗл Мишши—умӗнче хура пӗлӗт пек асапсем мар, пысӑкран та пысӑк шанчӑк асамат кӗперӗ пек ялкӑшнӑ, чӑваш совет культури ӗнтӗ ӗмӗт кӑна мар,

чăн-чăн пурнăçлă япала пулса тăнă, çавăнпа та вăл çырать:

**Шупашкарăн варри**
**Çиçĕм çутлăн вĕри**
**Çĕн сăмах вучаххи пултăр-и.**

Çеçпĕл Мишши хăйĕн сăввисенче кăна мар, пурнăçĕнче те канма-тăма пĕлмен, татти-сыпписĕрех ĕçре вĕренĕ. Вăл политикăла пĕлĕмлĕхне, большевикла принциплăхне çирĕплетес пирки хавасланса ĕçленĕ. 1919 çулта, Мускавра агитаторсенултă уйăхлă курсĕнче вĕренсе тухсан, чăваш çĕршывне ĕçлеме килет. 1920 çулта Чăваш облаçĕ организациленет. Унта вăл революциллĕ трибунал председателĕ пулса ĕçлет. Ку вăхăтра пусмăрлакансен тĕнчинчен юлнă элементсем: кулаксем, буржуаллă националистсем тата вĕсен хӳрешкисем хура юнĕсене пăлхатсах вăрттăн çĕленсем пек йăшăлтатнă. 1921 çул пуçламĕшĕнче Чăваш облаçĕнче те унта та кунта кулаксен пăлхавĕсем çĕкленнĕ, ирсĕр тăшмансем коммунистсене, активист-учительсене, советсенче активлă ĕçлекенсене сенĕксем çине тирсе йăтнă, хăшне-пĕрне чĕрĕллех çĕре чикнĕ, е ваксене янă.

Алхасса кайнă тăшмансене çĕр çинчен шăлса тăкас тĕлĕшпе Революциллĕ трибунал ĕçленĕ, вăл истори сцени çине тухнă пролетариатăн çивĕч хĕçĕ выранне пулса тăнă. Чă-

ваш облаçĕнчи трибунал председателĕ 21 çулти Çеçпĕл Мишши,—чăваш ĕçхалăхĕн шанчăклă ывăлĕ,—тăшмансене шеллемен, вĕсене вăл ĕçĕпе те, сăмахсемпе те çунтарнă. Шăла шăл хирĕç тăма пултарайман, ури айĕнчи тĕреке çухатнă класс тăшманĕсем Çеçпĕле курайман. Вĕсенчен хăш-пĕрисем, совет учрежденийĕсене те хĕсĕнсе кĕрсе вăрттăн йăва çавăрнăскерсем, класслă вĕчĕ тытса, ăна епле те пулсан такăнтарма кăлтăксем шыранă. 1921 çулхине Шупашкарти Юстици çурчĕ çунать, уншăн Çеçпĕле айăплама кăлтăк тăвас тесе элеклĕ çырусем çыраççĕ. Çакăн пек суя элекпе айăпласа турткалантарни пĕчĕкренех чирлĕ, шăмă туберкулезĕпе асапланакан хĕрӳ чĕреллĕ поэтăн кăмăлне те, сывлăхне те хускатать. Таса çинченех ирсĕр элекпе вараласа айăплани ăна йăвăр шухăша ярать. Çĕрĕн-кунĕн канмасăр ĕçленĕ хыççăн кăмăлĕ йăвăр шухăшсемпе хупланнипе поэт сывлăхĕ пит те начарланса çитет, çак вăхăтрах унăн тата ури юхма тапратать. Çакна пула вăл, сывлăхне юсас шутпа, 1921 çулта çулла—Крыма, Евпатори санаторине каять. Ачаранпах Пушкинпа Лермонтов сăввисене вуланипе тинĕсе курасшăн çуннă поэт халĕ ĕнтĕ ăна чи малтанхи хут курать. Санаторинче каннă май, йăвăр чирлĕскерĕн сывлăхĕ самайланать, кăмăлĕ уçăлать, ăс-хакăлĕ те лăпланса çирĕпленет.

Ку вăхăтра çамрăк Совет çĕршывĕ пит те пысăк йăварлăхра тăнă. Малтан империализм вăрçипе, унтан граждăн вăрçипе юхăннă çĕршывăн хуçалăхĕ арканса çитнĕ пулнă. Атăл тăрăхĕнче, çавăн пекех чăваш çĕрĕнче те, хăрушă выçлăх пусса тăнă. Выçлăх, тиф, тĕрлĕрен чир-чĕр халăха çавапа çулнă пек çулнă. Чугун çулсем чарăнса тăнă. Пур çĕрте те ултçичĕ çула пынă вăрçă хыççăнхи илемсĕр картина курăннă. Анчах та Çеçпĕл Мишши çаксене кура хавшаса ўкмен. Сывлăхĕ начар пулин те вăл чуна çĕклекен, малашлăх енне чĕнекен хĕрўллĕ сăвăсем çырма пуçлать. Тинĕс хĕрринче вăл çапла çырать:

„Тинĕс ахăрса карĕ. Хўме пек, хўме пек хумĕсем шавласа, çыран хĕррине вăйлăн пырса çапăна-çапăна саланаççĕ... Тинĕс, эсĕ вăйлă. Ху хумусен вăйлă, хăюллă юрри сассипе ман чĕрене вăй кўрт! Чĕре çунтăр! Чĕлхе вĕçне кăварлă сăмахсем килччĕр. Вара эпĕ хам чăваш çĕрне кайсан, хам вăя, чĕре вăйне чăваш çĕрне парăп. Кăварлă сăмахăмпа çамрăк чунсене вăратăп. Пурте тĕнче курччăр, çут тĕнче илемне пĕлччĕр".

Çеçпĕл умĕнче вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕс шавланă, дельфинсем вылянă. Вăл ун хĕрринче Пушкин сăввисене каласа çўренĕ. Сывлăхĕ хăвăрт самайланса, тĕрекленсе пынипе унăн



Евпатория, июнь 1921 г.

пултарулăхĕ те ӳснĕ, сарăлнă. Унччен вăл пĕртте кая хăварма юраман ĕççен хушшинче çӳренĕ, çавăнпа ун литература хавалĕшĕн ĕçлеме пушă вăхăтсем те пулман. Кунта ĕнтĕ вăл, кĕске вăхăтрах, халĕ пĕтĕм чăваш халăхĕ юратса вулакан тĕлĕнмелле ăста та тарăн шухăшлă сăввисене çырать. Вăл пĕр июнь уйăхĕнчех: „Çĕн кун аки“, „Катаран каç килсен“, „Шăршлă каç йăвăрри“, „Инçе çинçе уйра уяр“, „Тинĕсе“ тата ытти сăвăсене те çырнă *. Çакăнта кăтартнисем çеç те унăн пултарулăхĕн пысăк хăватне тĕкĕр çинчи пек кăтартса параççĕ, пĕр çаксемех ăна чи пысăк поэтсен шутне кӳртме çителĕклĕ тивĕçлĕх параççĕ.

Çеçпĕл Мишшин Крымра пурăннă чухнехи ĕмĕчĕсем ăçталла туртăнни çинчен унăн хум-

---

*) Çеçпĕл Мишши сăввисене тата илемлĕ рисункисене пит те сахал пухнă. Çăмахран, ача чухнехи тата 1916, 1917, 1918 çулхи ĕçĕсенчен тĕслĕх валли те пирĕн алăра ним те çук. Ăна пĕлнĕ çынсем каланă тăрăх, Çеçпĕл пысăк талантлă художник пулма палăрать, анчах халь унăн пĕр ӳкерчĕкне те ниçта курма çук. Çеçпĕл, сăвăсем çырнинчен пуçне тата вырăссен классикла поэчĕсене чăвашла куçарнă, литература теорийĕпе статьясем çырнă, тата ыт. те. Анчах та, çаксене пăртакçă пулин те пуçтарманни поэтăн пултарулăх силуэтне тĕплĕн кăтартса пама кансĕрлет. Малашне литературăра ĕçлекенсем Çеçпĕлĕнне кăна мар, ытти вилнĕ писательсен алçырăвĕсене те пуçтарасса шанас килет — *Я. У.*

сем"сиксе вылянна пек виçепеле çырнă „Тинĕсе“ ятлă сăвви лайăх каласа парать:

Вĕççĕр-хĕрсĕр тинĕсĕм,
Хуп-хуран, сип-симĕсĕн,
Кăпăк тумлăн, хумлăн, хумлăн,
Çырана çапса хăюллăн
Хумлă сулнăксемпе сулăн,
Хумлă кăпăкпа вĕре.
Ман çунатлă вутлă чунăм—
Çĕн çĕре чĕнен чĕре
Кĕрешӳ вăйне анчах
Кăмăллать çак тĕнчере.

Çак йĕркесене вуланă чух пире—поэт ăмăрткайăк пек вĕçни, хурçă пек çирĕп шанчăк тытни, çав вăхăтрах тата çеçке пек черчен, сывлăм пек çутă кăмăллă пулни курăнать, пур енчен те чăн-чăн юрăçă сăнĕсем тухаççĕ. Тăван çĕршывĕнчен килни нумай пулмасть, каçхи сулхăн сывлăшра суранĕсем те канăçлăх памаççĕ-ха, анчах вăл, хăвăртрах вăй пухса, хăйне çуратнă халăх телейĕшĕн кĕрешĕве тухассишĕн çунать.

Тинĕс, тинĕс, вăл санран
(Вăхăт çитĕ) уйрăлсан,
Савнă çĕршывне кайсассăн,
Йăвăр тимĕр сăнчăртан
Хăтăлнă чăвашсене
Паттăр та хăватлă саслăн,
Чĕрипе çунса, хавассăн,
Çĕн тĕнчен çĕн пурнăçне.
Çĕн кунне, çĕн кунçулне,
Çĕнĕ пурнăç хĕвелне

Юратса тăма калатăр.
Лăпкă халăх пултăр паттăр.
Вăл йăваш—йăвашлăх çĕттĕр,
Чун—кăвар çунатлăн вĕçтĕр
Кив çĕртен çĕн çул çине.

Çĕнĕ пурнăçа мухтаса янракан хорей йĕркисене пĕр чăн-чăн коммунист, халăха, çĕршыва хăйĕн куçĕнчен те, пурнăçĕнчен те хакла хуракан пархатарлă патриот кăна çырма пултарнă.

Çеçпĕл Мишши хĕвеллĕ Крымран уйăрăлсан, çав çулах август уйăхĕнче, Киев хулине пырса Хĕрлĕ çар ĕретне кĕрет. Вăл Украинăра пурăнса хăй юратнă Тарас Шевченко поэт çĕршывĕпе паллашма тăрăшать. Анчах кунта унăн, мĕн пĕчĕкренех пуçланнă чирĕ каллех вăранать те, Хĕрлĕ çартан тухма килет, вара вăл 1922 çулăн пуçламĕшĕнче хăйĕн çывăх тусĕ Федор Покрышня патне, Чернигов кĕпĕрнинчи Остер уездне пырать. Март уйăхĕнче Остер хулинчи уездри çĕрпайне выççисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлеме кĕрет. Хăрушă выçлăх шăлне шаккаса тăнă вăхăтсем. Йĕритавраллах кăмăла çуракан картинăсем курăннă. Украинăра та Атăл таврашĕнчен çăкăр татăкĕ шыраса пынă, типсе кайнă пит-куçлă çынсем темĕн чухлех пулнă. Вĕсене малашнехи пурнăçшăн, ыранхи телейлĕ кунсемшĕн выçлăхран çăлса хăварас тесе çамрăк совет влаçĕ пĕтĕм вăйне хунă. Кулаксем хăйсен тыр-

рисене пытарнӑ, вӑл тырра вӗсем вӑрттӑн мелсемпе, шухӑшласан пуҫ ҫаврӑнса каймалла ытлашши пысӑк хаксемпе сутнӑ. Ҫеҫпӗл Мишши ҫав кулаксемпе кӗрешес ответлӑ фронтра ӗҫленӗ. Чирӗ каллех хӑвӑрт сарӑлса пынӑ, ҫамрӑк шӑмшака ҫӗмӗрнӗ. Ҫакӑн пек йӑвӑр самантсенче, алхасса кайнӑ суранне пусарса кӑшт та пулин лӑпланасчӗ тенӗ вӑхӑтсенче, вӑл хӑйӗн вилӗмӗ ҫывхарни ҫинчен асӑнса ҫырма пуҫлать, унӑн сӑввисенчен те тӑпра шӑрши кӗме тытӑнать. Анчах, хӑйӗн сывлӑхӗ пирки пуҫланнӑ трагедийӗ ҫинчен асӑнса хурланать пулсан та, вӑл ирӗкленнӗ ҫӗршыв чӗрӗлессине хытӑ ӗненет; ҫырса пӗтереймен юлашки сӑввинче те „малта—хӗвел" тет вӑл.

Ҫапла вара Ҫеҫпӗл Мишши, пӗр саманта кӑна килсе тухнӑ йӑвӑр шухӑшне ҫӗнтереймен пирки, 1922 ҫулхи икнӗн 15-мӗшӗнче ҫакӑнса вилет. Ун чухне ӗнтӗ Украина хирӗсенче ӳсе ҫитнӗ ҫӑра тырӑсем кашласа ларнӑ, сад-пахчисенче тӗрлӗрен ҫимӗҫсем ҫитӗннӗ. Вилмелле те мар пек. Анчах та Ҫеҫпӗл хӑйӗн усал чирӗпе йӑвӑр шухӑшӗсене ҫӗнеймен,— вилнӗ. Ҫеҫпӗл Мишшине Старогородка ялӗнчи сад-пахчине пытарнӑ, тӑпри ҫине лартнӑ юман юпа ҫине унӑн тусӗ – Федор Покрышня —Украина чӗлхипе ҫапла эпитафи ҫырса хунӑ:

Оця эдина могила
Великого поэта сховала.
З ним богато писень новых
Будена земля потеряла*.

Çеçпĕл Мишши пурнăçĕн утăмĕсене эпир кунта кĕскен кăна каласа патăмăр. Вĕсене те пирĕн пĕрчĕн-пĕрчĕн çеç шыраса тупса пухма тӳрĕ килет, мĕншĕн тесен Çеçпĕл Мишши час-часах вырăнтан вырăна куçса çӳренĕ тата юлашки çулĕсене чăваш литературинче ĕçлекенсенчен аякра ирттернĕ. Кусемсĕр пуçне ăна ăнсăртран йышăннă пĕччен вил-тăпри те пирĕн куç умĕнчен фактсене, кăвар чĕреллĕ паттăрăн хăватлă юррисене пытарса тăрать.

Эпир Çеçпĕл Мишшине чунтан юрататпăр, унăн ятне социализмла культурăн хисеплĕ пантеонĕнче сыхлатпăр; анчах та вăл паттăрлăхне çухатса пăшканине, çиçĕмлĕ те хĕмлĕ юрăсем юрланă чĕлхине хăех вăхăтсăр чарса лартнине тиркетпĕр. Мĕн пулса иртнине каялла тавăрма çук, çавăнпа та поэт мĕн çырса хăварнине тĕрĕс хака хуратпăр.

---

* Çакă пĕчченçĕ вил тăпри
Аслă поэта пытарчĕ.
Унпа нумай çĕнĕ юрă
Çухатрĕ ирĕкленнĕ çĕр.

Çак йĕркесен авторĕ Федор Покрышня хăй те сăвăсем çырнă. Вăл Çеçпĕл Мишши сăввисене чылай усранă тата унăн биографине йĕркелес пирки нумай пулăшрĕ. Унăн Çеçпĕл Мишшине асанса çырнă сăввисем те пур.

Çеçпĕл Мишши икĕ самана хушшинче пурăнса ӳснĕ поэт. Кивĕ саманана, капитализм стройне рабочи класпа хресченсем çĕмĕрсе тăкса совет саманийĕ туса çирĕплетнине вăл хăй куçĕсемпе курса тăнă. Ĕлĕк правасăр пулнă Хĕветĕрсем права илнĕ, вĕсем „хĕвеллĕ" çĕр çине хуçа пулса тухнă. Хальччен мăшкăлра пулнă чăваш чĕлхи ытти халăхсен чĕлхипе пĕртан хисеп илет, государство чĕлхи пулса тăрать. Çавăнпа та ĕнтĕ, Çеçпĕл Мишши пултарулăхĕнче эпир икĕ тĕнче тытăçса ӳкнине куратпăр: пĕр енчен, ĕлĕкхине аса илсен—хурлăх, малашнехине пăхсан – çуталса тăр кан савăнăç. Поэт пĕрмаях «вăхăт çитĕ» теме юрататъ. Вăл çырать:

> «Вăхăт çитĕ. Чăваш чĕлхи те тимĕр татĕ. Çивĕч пулĕ, хĕртнĕ хурçă пек пулĕ. Вăхăт çитĕ—чăваш юрри те янраса кайĕ; таса пĕлĕте, çут тĕнчене, хĕрлĕ хĕвеле савса юрлĕ вăл. Чăваш юрринче таса пĕлĕт çумĕнчи тăри юрри илтĕнĕ. Чăваш юрринче тинĕс хумĕ шавлĕ, вăрман чашлĕ. Вĕçĕ-хĕррисĕр улăхсем симĕсленсе выртĕç. Авалхи хуйхă сасси илтĕнмĕ. Телей куç умне тăрĕ. Атăл хĕрри тăрăх тĕнче кĕсле сассин янраса тăрĕ, çакă—чăвашăн юрри пулĕ, чăваш сăмахĕ кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ».

Кăна вăл ирĕке тухнă чĕлхи хăват илсе чечеклениччен çырнă. Халĕ ĕнтĕ Çеçпĕл Мишши кĕтнĕ вăхăт çитрĕ. Чăваш чĕлхи, автономлă республика чĕлхи пулса, аслă Атăл хумĕсем çийĕнче, паровозсемпе прахутсен сассисемпе хутшăнса ĕç симфонийпе кĕрлет, вăрмансем çийĕнче янăрать. Темиçе ĕмĕр хушши хура пўрт сенче, сĕм чăтлăхсенче пытанса пурăннă халăх чĕлхи вĕçĕ хĕррисĕр сывлăшра радио хумĕпе ярăнать, унăн сасси — ĕмĕр пăрлă Арктикăна, Çĕпĕр тайгисене, шавлă тинĕссем çине çитех илтĕнет. Ленинпа Сталин партийĕн нацилле политики чăваш чĕлхине те кăварлă вăй пачĕ, унпа тимĕр татмалла туса хучĕ

Тĕнчене тасатрĕ ирĕк вут кăварĕ,
Çут тĕнче çуталчĕ, иртрĕ авалхи.
Тĕттĕмĕ тĕл пулчĕ, мăшкăл иртсе кайрĕ,
Тин ирĕке тухрăн, тĕп чăваш чĕлхи!
Миçе ĕмĕр витĕр асаппа тухмарăн,
Миçе çичĕ ютăн мăшкăлĕ пулса...
Çапах паттăр юлтăн, вăйна çухатмарăн,
Халь те пулин çивĕч, кăвартан таса.
Йăвăр асапран та, тимĕр сăнчăртан та
Эсĕ парăнмасăр хăтăлтăн пулсан—
Пулас пурнăçра та çивĕчпе хăватлăх
Ют чĕлхесенчен те кая пулмĕ сан.
Кăмăллă çĕршывăн кăмăллă чĕлхиçĕм!
Иртнĕ хурлăхушăн çитĕ ырлăху:
Хĕрлĕ хĕрнĕ хурçă, çунтаракан çиçĕм,
Вĕри вутлă çулăм эсĕ пулăн ху.
(„Чăваш чĕлхи").

Вăл ĕмĕтленнĕ вăхăт—пирĕн вăхăт. Поэт-писатель ячĕ Сталинла Конституци саманинче хисепле выран илчĕ, вĕсене Асла Сталин «чун инженерĕсем» тесе мухтавлă ят пачĕ.

Çеçпĕл Мишши, халăхăн чун инженерĕ пулса, совет чăваш литературин сăпки умĕнче тăнă; ахальтен мар ĕнтĕ эпир унăн сăввисем çинчен чăвашсен социализмла çамрăк культурине ачашланă, ĕмĕт кӳртнĕ сăпка юррисем тесе хăюллăнах калатпăр.

Пĕр вăхăтра Çеçпĕл Мишши творчестви тавра тавлашу пуçланса кайнăччĕ. Хăшпĕр критикла чăркăш этемсем çаннисене таварсах Çеçпĕле чăваш совет поэзинчен кăларса пăрахма тытăннăччĕ. Критика тени литературăшăн питех те кирлĕ япала. Апла пулсан, вăл тĕплĕ те ăслă пулмалла. Унсăрăн, критик перине тытнă этем Крылов баснинчи айван упăте выраннех çеç лекме пултарать. Упăтен ватăла киле куçĕ начарланнă та, çынсенчен йăла илсе, вăл куçлăхсем туяннă. Хăлхи çине те лартать, хӳрине те тăхăнтарать вăл вĕсене, анчах куç çутти пĕртте хутшăнманнине кура куçлăхсене чăлпар ватса тăкать. Критик та, хĕçне тытма пĕлмесен, хисепрен тухать,—арăш-пирĕш шухăшĕсем ăна, тытма пĕлмен пушă пекех, хăйне çаварăнса лекме пултараççĕ. Виçĕ хурăн хушшинче аташса кайнă критиксем Çеçпĕл пултарулăхĕнче пе-

симизм чакаларĕç, вăл сăзвисенче час-часах «чăваш» сăмаха асăннăран ăна буржуаллă националистсен шутне кӳртесшĕн кăшкăрашрĕç. Мĕн тăвăн, «хут тӳсет!» Кунга эпир «вилнĕ ĕнен сĕчĕ тутлăччĕ» тенĕ пек—вилнĕ писательсен пулгарулăхне пур енчен те иттерсе мухтас йĕрпе каясшăн мар,—ăна тивĕçлĕ хак парасшăн çеç.

Чи малтанах, мĕншĕн Çеçпĕл Мишши кашни сăввинчех «чăваш» сăмаха асăнать-ши? Ку ыйтăва хирĕç тĕрĕс ответ парас тесен, унчухнехи вăхăт çине çаврăнса пăхса тишкерни кирлĕ.

Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче культура строительстви фронтĕнче сахал мар великодержавнăй шовинистсен хӳрешкийĕсем те йăва çаврăнă пулнă. Вĕсем нациллĕ искусствăпа литературăна ӳсме çул парас мар тесе, уççăнах хăйсен тезисĕсене сарнă. Вăл тăшмансем чăваш пек вак халăхсен культурине ӳсме пушшех те пусахласа тăнă. Вĕсем —чăваш чĕлхи халăхăн тарăн чунне кăтартма вăйсăр, унăн пуянлăхĕ çăпатапа шĕшлĕ çинчен çеç каласма çитет, вăл халь пăртакçă çĕкленчĕ пулсан та, вăхăтсăр çуралнă имшеркке ача пекех пурĕпĕр пĕтмелле, тенĕ вĕсем; чăвашла çыракансем çине пăхса шăлйĕрнĕ. Çеçпĕл Мишши вĕсене хирĕç шăлне çыртса кăвар пек çунтаракан сăвăсем çырнă.

Çавăнпа та ĕнтĕ унăн памфлетла çырнă хирĕçле сăввисенче пĕрмаях чăваш халăхĕ чĕрĕлнине, унăн чĕлхи „çăпата чĕлхи мар"— государство чĕлхи иккенне асăнма тӳрĕ килнĕ. Вăл, кĕрешӳ хĕрсе кайнă чухне, хăй халăхĕн ятне девиз вырăнне хурса асăннă, коммунистсен партин нациллĕ политики унăн пултарулăх çулĕнче пароль пулса тăнă. Вăл чăваш литературине ӳстерессишĕн çунни аслă вырăс халăхĕн культурине чунтан-вартан юратнинчен тухса пынă. Литературăна пролетарилле революципе килнĕ сарлака содержани—примат çĕнĕ формăсем ыйтнă, вăл тăвăр та хĕсĕк силлабика пӳртĕнче шăнăçма пултарайман, çавăнпа Çеçпĕл тоника системине чăваш поэзине те тăван форма туса кӳртес пирки тата литература чĕлхине пур вырăнти чăвашсем те ăнланмалла йĕркелес пирки хытă ĕçлет.

„Ĕлĕк чăвашсем таçта тухса çӳремен, вăрмансем хушшинче пурăннипе, чугун çул тавраш̆е çуккипе, аякри чăвашсемпе пĕрлешмен, çавăнпа та чăваш пек пĕчĕк халăх хушшинчех çавăн пек уйрăмлăх (диалектлă уйрăмлăх—Я. У.) тухса кайнă. Малашне пĕр-пĕринпе хутăшма аванланса пырать. Пĕр енчи чăвашсен тепĕр енчи чăвашсемпе час часах курăшса хутăшмалли пулĕ,—вара ун чух пĕр енчи

чӑвашсен чӗлхипе тепӗр утӑмри чӑваш чӗлхин нимле уйрӑм та пулмӗ, пӗр тӗп чӑваш чӗлхи пулӗ"—тесе ҫырать вӑл.

Ҫеҫпӗл Мишши тоника системине пуҫласа янӑ тенине хирӗҫ те шӑрчӑкла сиккелекен критиксем пулкаларӗҫ. Вӗсем, ҫав шухӑша хирӗҫлес пирки, чӑвашсен ха ӑх юррисенче те тоника системи пур тесе х йсен шухӑшӗсене ҫирӗплетнӗ пек пулчӗҫ. Паллах ӗнтӗ, литература халӑх сӑмахлӑхӗнчен, фольклортан пӑрӑнса кайса пушӑ сывлӑшра хӑйне тӗллӗн керменсем тума пултараймасть, литература вӑл халӑх сӑмахлӑхӗпе пӗр тӑван япала, унӑн ывӑлӗ-хӗрӗ; анчах та Ҫӗҫпӗл инициативине, вӑл чӑн-чӑнах тоника а хитектурине чӑваш литературине кӗртнине унтан ниепле те туртса илме ҫук. Вӑл хӑйӗн пысӑк пултарулӑхӗпе чӑваш поэзине ӳсме, ӑна формӑсем енчен пуян пулма сулмаклӑ инерци панӑ. Чӑваш юррисенче, пуринчен ытла ташӑ кӗввисенче тоника системи пурри чӑн та хытӑ палӑрать. Анчах та Ҫеҫпӗл Мишши ҫак япала чӑваш поэзине ютӑ маррине теори енчен кӑна мар, хӑйӗн пултарулӑхӗпе те ҫирӗплетсе пачӗ. Чӑркӑша кӗме юратакан критиксем хӑть те мӗн калаччӑр,—анчах Ҫеҫпӗл Мишшиччен чӑваш поэчӗсенчен никам та тоникӑпа ҫырман, вӗсемшӗн ямб тата хорей тенисем алӑк патӗнчи хӑнасем пекех курӑн-

масăр тăрса юлнă. Ку ыйту тавра тавлашни ĕç çукран кĕрĕк арки йăвалана пекех усăсăр.

Чăкăлташ критиксем Çеçпĕл Мишши йынăшса ахлатнине, вăл пессимизм картинче сиккеленине ăçтан тупаççĕ-ха? Поэт 1922 çулта, хăй вилес умĕн йăвăр ч р асаплантаррине тÿснĕ чух, хурлантаракан сăвăсем çыркалана Ту çинче юхакан çырмасем тăптăрă, таса, тĕпĕнче пулă выляни те курăнать, анчах унта хăшпĕр чухне çÿп-çап тата пылчăк та лекме пултарать, уншăн вăл тăрă çырмана пылчăклă тесе калама юрамасть. Çеçпĕл Мишши юлашки çулĕнче хăйĕн хастарлăхне çухатать, çакăнса вилни те унăн каçалма çук пысăк йăнăшĕ Çапах та эпир Çеçпĕлĕн чăн-чăн пысăк пултарулăхне хамăр чĕре çумне тытатпăр. Юлашки уйăхсенче çырнă сăввисем уншăн характерлă мар,—вĕсем, тăрă шывлă çырмана ăнсăртран ÿкнĕ çÿп-çапсем пекех, хĕвел çутиллĕ поэтăн пĕтĕм творчествине варлама пултараймаççĕ.

Çеçпĕл Мишши вилнĕренпе чылай вăхăт иртрĕ. Ку вăхăт чăваш совет литературишĕн пысăк çĕнтерÿллĕ те хаваслă тапхăр пулса тăчĕ. Çеçпĕл Мишши ĕмĕтленнĕ ĕмĕт—пирĕн пурнăç.

Пĕлтер мана, тăван çĕршывăм,
Хăçан кăтартăн халăхна
Ху чĕлхÿне хăват кÿртмешкĕн

Тĕнчене килнĕ ывăлна?
Кăвар чĕре! Кăвар чĕлхеллĕ
Чăваш ачи, сассуна-пар!
Тухсам кунта. Сана кĕтеççĕ.
Килсем! Килсем! Эс пур—çук мар.
Часрах килсе хăватлăх кӳртчĕ
Чăвашăн капăр чĕлхине.
Çунтартăр çулăмлă, кăварлă
Чĕлхӳ çынсен чĕрисене.
Ĕмĕрлĕхе яту сан юлĕ
Шупашкартан Кавал таран,
Çĕрпӳ, Чикме, Етĕрне урлă
Юрру сассийĕ кайĕ сан.

Çапла çырнă вăл 1920 çулта. Поэт хăйĕн ĕмĕтĕнче чĕлхе янравĕн амплитудин сарлакăшне те, географине те ытла пĕчĕкçĕ илнĕ. Чăваш чĕлхине хăватлăх кӳртекенсем халь ĕнтĕ нумайăн килчĕç, вĕсен „Сунталĕ" янрани Чикме патĕнче кăна мар, Мускав тавралăшĕнче те илтĕнет. Хăшпĕр чăваш писателĕсен ячĕ пĕтĕм Совет Союзĕшĕн паллă.

Чăвашра çĕнĕрен сăвăç
Çуралмассерен,
Ман тăпра çине саркайăк
Пытăр ир çинчен,
Йăмрасем çине ларайтăр
Хĕвел ăшшине,
Янра юрăпа мухтатăр
Чăваш чĕлхине.
(„Эпĕ вилсен")

Тĕрĕссипе каласан, халь ĕнтĕ чăвашра кашни кун тенĕ пекех сăвăçсем çуралаççĕ,

мĕншĕн тесен пирĕн пĕтĕм çĕршывăмăр Сталинла Констутуци хĕвелĕ айĕнче юрăсен çĕршывĕ пулса тăчĕ. Унăн ывăлĕсем-хĕрĕсем текех ĕнтĕ тункатаран хăракан „Хĕвел ансан Хĕветĕрсем“ мар, вĕсемшĕн тĕнчере ниепле сехрене хăпартакан япаласем те çук. Хăравçă Хĕветĕрсен ывăлĕсем Ителмес патĕнче кăна мар, таçта-таçта çитсе аслă хуласенче те çÿреççĕ, сывлăшра ăмăрткайăксенчен хăвăрт вĕçеççĕ. Вĕсем Хасан кÿлли патĕнче—арçури пек хăратма пăхнă самурайсене кĕл туса вĕçтернĕ çĕрте те пулчĕç.

**Кăвар чĕрем—пин çын чĕри.**
**Эп пĕр çын мар—эп хам пин-пин,—**

тени халĕ ĕнтĕ кашни ĕççчен çыншăн марш пек пулса тăчĕ. Колхозлă сарлака хирсенче, хапрăк-савăтсенче чăваш çыннисем ытти халăхсемпе пĕр шухăшлă, пĕр ĕмĕтлĕ пулса ĕçлеççĕ. Паян ĕлĕкхи тĕттĕм, тискер пурнăç çинчен калани пирĕншĕн, юмахра илтнĕ пек, ĕненмелле мар пулса илтĕнет. Вилес патне çитнĕ чăваш çĕршывне Аслă коммунистсен партийĕ пусмăртан çăлса, телей çĕршывĕ туса хучĕ.

*Яков Ухсай.*

# ВĂХĂТ ÇИТĔ

Вăхăт çитĕ. Чăваш чĕлхи те тимĕр татĕ. Çивĕч пулĕ, хĕртнĕ хурçă пек пулĕ. Вăхăт çитĕ—чăваш юрри те янраса кайĕ. Таса пĕлĕте, çут тĕнчене, хĕрлĕ хĕвеле савса юрлĕ вăл. Чăваш юрринче—таса пĕлĕт çумĕнчи тăри юрри илтĕнĕ. Чăваш юрринче тинĕс хумĕ шавлĕ, вăрман чашлĕ. Вĕçĕ-хĕррисĕр улăхсем симĕсленсе выртĕç. Авалхи хуйхă сасси илтĕнĕ. Телей куç умне тăрĕ. Атăл хĕрри тăрăх тĕнче кĕсле сассин янраса тăрĕ. Çакă—чăваш юрри пулĕ. Чăваш сăм хĕ кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ!

„Авалтанпа чăваш хĕсĕкре пурăннă. Мĕн асап курман, мĕн тӳсмен вăл хăй чĕлхине сыхласшăн! Пуçа усса, çĕлĕке пусса лартса, ют халăхсем хушшинче шарламасăр ларнă вăл. Пусмăрласа, хĕстерсе салатса янă ăна.

Унталла-кунталла, вăрман айне тарса пытаннă. Мĕскĕн чăваш! Мĕскĕн чăваш! Сапаланса, уйăрăлса пĕтнĕ сан çыннусем. Ют халăхăн пуянĕсем сан чĕлхӳне путарасшăн тăрăшнă.

Чăваш çапах та пур асапран, пур хурлăх айĕнчен чăваш ятне çĕртмесĕр ку таранч çитернĕ.. Ĕмĕрсем иртсе пынă. Чăваш шăппăн калаçнă. Чăваш чĕлхине пур тавраран туллана. Вăл çавах та халĕ те чĕрĕ, халĕ те сывă. Пур мăшкăла пăхмасăр—халĕ те сывă. Сывă вăл! Сывă пултăр малалла та! Çак ĕç—чăваш малашне хăй чĕлхипе аслати авăртса, çиçĕм çиçтерессине палăртать. Шанатпăр! Вăхăт çитĕ!

Шанчăк пуррисем—телейлĕ. Авал асаттесене мăшкăл тунине манас мар. Мăшкăл айĕнчен чĕрĕ тухнă чĕлхе тĕнчерен çухалмĕ.

Ку таранччен чăваш чĕлхийĕ илтĕнмен,—малашне чăваш юрри илтĕнĕ; чăваш сăвви, чăваш сăмахĕ, Атăл хумĕ пек, вăрман сасси пек, кĕсле вырăнне пулĕ. Чăваш чĕлхи тимĕр татĕ, çивĕч пулĕ.

Вăхăт çитĕ! Вăхăт çитĕ!! Вăхăт çитсен, çакна çыракана: „Ку чăн каларĕ“—тесе асăнĕç.

---

## ÇĔН КУН АКИ

Кăвак çутăран шăратнă акапуç
Туртийĕ хушшинче хĕвел тапратĕ,
Çĕн Кун — шевлĕ çаврăнлă ылттăн пуç —
Чăваш уйне ака тума тухатĕ.

Çĕн Кун аки пусĕн хĕп-хĕрлĕ тимĕрри
Кассă-кассă уй урлă кас тăватĕ,
Кас-кас айне чăвашăн иртнĕ ĕмĕри
Вилсе выртса шытарăнса ыратĕ.

Çĕн кун пăхать уй ылттăн аки-пуç
Кăпăшилса хуратрĕ (хытнă) уйсене;
Сип-симĕс улăх урлă тĕнсĕр çын çил-куç
Уйсем çине савса çапать шăврне.

Çĕн Кун пиччĕ кăвĕрлă хурăç алăпне
Çар хĕрлĕ кунтăкран хусем сине
Кăвĕрлă шăвăсна пин, çĕр пин сылтăр акр ф,

Ирхи шевле ун хыççăн ылтăн çÿрине
Çĕр пин çăлтăрлăн сунаи Чăваш çĕрне
Тĕр тĕрлесе, çÿрелесе пăракрĕ.

Çĕн Кун акпи шăтма вăхăт çитсен,
Çĕн Кун уйне хура çĕр ăйĕнчен,
Хĕвел пăлчи пулса хĕвеллĕн саралса, хăпарлан
Чăваш çыннин кунçулĕ тухĕ.

Укаллă, ылттăн-кĕмĕллĕ хĕлхĕсиĕ ушăн
Кĕслĕ сасси пулса çĕр тăрăх шăххăн юхĕ.
Хаватлă, çĕн чĕрелле çĕн ĕмĕр чăвашĕ,
Хуллиуссине кăвак пĕлĕте перĕнсе
Кунçул çине тухса, кĕпеллĕ туигăр тумланĕ,
Çĕн Кун ăна ытлĕ савăнса, ачашшăн;
Умне, çĕн çул çине, çĕн чечексем чĕртсе
Интернационал кĕнсĕрĕ анĕ.

Крым, утă уйăхĕн 7-мĕшĕ, 1921 ç.

## КАТАРАН КАҪ КИЛСЕН...

Катаран каҫ килсен, каҫхи кунҫи пеҫки
Уйсене шăпăхна куҫласан,
Пĕркерен-пĕркерен тĕрлĕ шукăш йĕрне
Куҫăма пуҫтарна пуслачан —
Ĕлĕкхи ĕмĕрсен ĕмĕлки-кĕлетки
Куҫăма курăнаҫҫĕ аякран.

Ĕлĕкхи ĕмĕрсен ĕмĕлки хушшинче
Чăваш ҫĕрĕ мана курăнать:
Ман ҫĕршыв хĕрлĕ юнпа хĕрес ҫунинче
Ҫакăнса, сыхăнса тăрать,
Кăрмăкларинна асапла чăваш чĕрисем
Юн тумлать, юн тумлать — хĕрлĕ юн,
Чăваш пуҫĕ ҫинче хуп-хура ҫилĕ куҫ
Шăхăрса ахăрать пур ҫĕрте...

Ҫĕр ĕртсен — ĕрĕк кун хĕрелтуххăс сирен
Ĕмĕрсене ухтсан — сăнамаша шарде

Пек шăратсан кĕмĕл саслăн килсен, —
Ман юратнă çĕршыв вилĕмрен чĕрĕлнĕ,
Вăл асаплă хĕрес çумĕнчен салăннă
Пур çынсене те савăть куçăмпа.

Евпатория, 16/VI-21 ç.

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИ

Тĕнчене тасатрĕ ирĕк вутçăварĕ,
Сут тĕнче сутăлчĕ, иртрĕ авалхи,
Тĕттĕмĕ тĕп пулчĕ, мăшкăл иртсе кайрĕ —
Тин ирĕке тухрăн, тĕп чăваш чĕлхи!
Мисе ĕмĕр витĕр асаппа тухмарăн,
Мисе çичĕ ютăн мăшкăлĕ пулса...
Çапах паттăр юлтăн, вăйна сухатмарăн,
Халь те пулин çивĕч, кăвартан таса;
Нăвар асапран та, тимĕр çăнчăртан та
Эсĕ парăнмасăр хăтăлтăн пулсан —
Пулас пурнăçра та çивĕчпе хăватлă
Ют чĕлхессенчен те кая пулмĕ сан.
Кăмăллă çăршывăн кăмăллă чĕлхисем!
Иртнĕ хурлăхушăн çитĕ ырлăхĕ.
Хĕрлĕ хĕрнĕ хурçă, çутатарнăн çиçсе,
Вĕри вутпа çулăм эсĕ пулăн ху,
Асла Атăл урла Атăл ишвĕ майĕ,
Вăрман витĕр кайĕ мухтавлă ята,

Кӗсле-кӗвви саслӑ витӗр шаттарса кайӗ
Уйӑххӑн кӗвеллӗн сунӗ хӑвату,
Атӑл хумӗсенӗн шавланнисене те,
Хӑна та ӳстернӗ вӑл Шупашкара,
Ирӗклӗ сӗрпшывӑн ырӑ ирӗкне те
Юрӑ хурса мухтӑн асӑнса пара.
Сана шапакане, сакла сиррине
Сӗр айӗнче выртӗ тапӑхкан ун чух,
Хӑй сывӗнни сӗрӗ ана пусса анӗ,
Сан ҫапна курмашкӑн тапа пулас ҫук,
Ун ҫинче чӑвашӑн чӗлхи илтӗ пулӗ,
Тӑшри синчӗ янӑ ирӗклӗх юрри,
Вара виленӗскерӗ канлӗ кӗпӗ выртӗ,
Канлӗ, сывӑ пулӗ сийӗвчи тӑнри.

---

# ЧӐН ЧӖРӖЛНӖ

Эй, ваттисем! Иртнӗ ӗмӗрӗре
Асап чӑтса иртернисем!
Мӗн авалтан чӑваш чӗлхи
Асап чӑтни аса килет-и сире?
Сире аса килет-и авалхи?
Шухӑшлӑр-ха! Астӑвӑр, ваттисем!

Чӑваш ҫынни авал чухне
Пуҫне чиксе шӑппӑн ҫӳренӗ,
Тункатаран та шикленнӗ...
Чӑваш чӗлхи асап айне
Путарӑннӑччӗ ун чухне...

Эй, ваттисем!
Эй, ват ҫынсем!
Авал чӑваш асаплӑ пулнине
Ҫамрӑксене каласа парӑр;
Тӑван ҫӗршывӑн капӑр чӗлхине

Ялан савма хушса кăнарăр,
Эй, ваттисем! Пĕтĕм чĕререн
Сире пиллетпĕр ыр пилпе.
Эсир асапсене парăнманнипе
Чăваш чĕлхи чĕрĕлнĕ вилĕмрен.

Кăвак-хуппи пĕлĕт тăрăнчен
Чăваш çĕрне сутăтса ячĕ.
Тăван çĕршыв чĕлхи хăнарĕ
Чĕрĕлсе тăнĕ вилĕмрен.

Чăваш чĕлхи текех чухăн мар,
Чăваш чĕлхи чĕрĕлнĕ вилĕмрен.
Эй, чăвашсем! пĕтĕм чĕререн:
— Чăн чĕрĕлчĕ! — тесе кăшкăрар.

Эсир тата, вĕри чунсем!
Кăвар чунсем, яшсем, хĕрсем!
Кас-кас урамсене тухса,
Кĕвĕллĕ юрăсем хурса
Тăван çĕршывăн чĕлхине
Мухтав тупа мансă кайман-и?
Чăваш чĕлхин хĕвеллĕ илемне
Чунтан савса тăма манман-и?

Пур çамрăксем! çунат хушăр!
Чăваш чĕлхи чĕрĕлчĕ вилĕмрен!
Эй, çамрăксем! пĕтĕм чĕререн:
— Чăн чĕрĕлнĕ! — тесе кăшкăрар.

Тăван çĕршыв вăрманĕсем!
Чечек çеçки тăхăнна улăхсем!
Чăваш чĕлхи хăвачĕ кăмăлне
Мухтав юрри шăвласа янрăр!
— Авал асап чăтнă вырăнне
Чăваш чĕлхи кăватлăлантăр!
Сĕм вăрмансем, шăвласа ларăр!
— Чăваш чĕлхи чĕрĕлчĕ вилĕмрен!
Уйсем, вирсем, вĕçе-вĕçĕмрен
— Чăн чĕрĕлчĕ! — тесе ян янрăр!
Чăваш чĕлхи текех чухăн мар!
Чăваш чĕлхи чĕрĕлчĕ вилĕмрен,
Эй, чăвашсем! Пĕтĕм чĕререн
— Чăн чĕрĕлчĕ! —
Тесе кăшкăрăр!

Ака уйăхĕн 20-мĕшĕ, 1921 çул.

# ПУЛАССИ

Çил-тăвăл иртсессĕн йăлтăра çанталăк
Кăмăллăн та лăпкăн ачашланса канĕ.
Юмахри илемлĕ çут кĕмĕл çурт майлă
Çут тĕнче çуталĕ, çĕнелсе лăпланĕ.

Ирĕклĕхшĕн вилнĕ тăвансенĕн юнĕ
Чĕлтĕрлти çеçкеллĕ хĕрлĕ чечек пулĕ.
Кĕмĕл сывлăм шывĕ чечек çинче çунмĕ,—
Çунĕ çут тĕнчешĕн тăкăнна куççулĕ.

Чухăнлăх, пуянлăх, уйрăмлăх йăранĕ
Ирĕкпе çĕнелнĕ пурăнăçран тарĕ;
Чĕрере ачашшăн çунĕ, çулăмланĕ
Тантăшлăх, тăван лăх, юрату кăварĕ.

## ЧĂВАШ АЧИНЕ

Пĕлтер мана, тăван çĕршывăм:
Хăçан кăтартăн халăхна
Ху чĕлхӳне хăват кĕртмешкĕн
Тĕнчене килнĕ ывăлна?
Кăвар-чĕре! Кăвар чĕлхеллĕ
Чăваш ачи, сассуна пар!
Тухсам кунта, сана кĕтеççĕ.
Килсем! Килсем! Эс пур,—çук мар.
Часрах килсе хăватлăх кĕртчĕ
Чăвашăн капăр чĕлхине.
Çунтартăр çулăмлă, кăварлă
Чĕлхӳ çунсен чĕрисене.
Ĕмĕрлĕхе яту сан юлĕ,
Шупашкартан Кавал таран,
Çĕрпӳ, Чикме, Етĕрне урлă
Юрру сассийĕ кайĕ сан.
Чăваш чĕлхи ăсти! Кăварлă
Чĕрӳ сан сисĕ чĕннине.
Шанатăп. Ĕмĕте усратăп:
Эс килĕн. Килĕн тĕнчене!

**Шупашкар, 1920 ç.**

## ЧĂВАШ ПОЭТНЕ АХАХА АСĂНСА

Тăван çĕршыв чĕлхин малашнехи çинчен
Шухăшласа, пуçа тĕрлĕ шухăш килсен,
Сан иртнĕ ĕмĕрӳ, çĕре кĕнĕ поэт,
Чуна пăчăртаса ялан аса килет.
Чăваш чĕлхи çеçке ярса чечекленсен,
Сан хĕвеллĕ чĕлхӳ кăварланса çитсен,
Чăваш çынни хăна юратакан пулсан,
Ĕмĕтсене татса, куçу хупăнчĕ сан;
Тăван чăваш çĕрне юратакан чĕрӳ
Сикми пулса, хуллен татăлчĕ ĕмĕрӳ.
Пытарчĕç çĕр айне чăвашăн ĕмĕтне,
Сăвву кĕвви анчах юлайрĕ çĕр çине.
Çурхи кунсем каллех çутатрĕç тĕнчене.
Тĕнче симĕсленет... Хĕвел йăлтăр... Уяр.
Анчах сана пĕрех: сана, вилнĕскерне,
Çуркуннехи тĕнчен илемĕ кирлĕ мар . . .
Калас килет сана: Чăваш чĕлхи илемĕ
Ӳссех пырать. Тăрсам! Каллех сăвă çырар.

Анчах, мана чӗнсе, мана: илтетӗп, темӗн,
Вилнисене тӗнче илемӗ кирлӗ мар...
Çыврах, тăван поэт!.. Сăвву кӗввисене,
Сан сăмаххусене никам та манас çук.
Чăваш чӗлхи пур чух тăван поэт ятне
Вӗри, кăвар чунусем савма пăрахас çук.
Чăваш поэчӗсен сăвви-юррисене
Вула-вула чунран хавасланнă чухне,
Сан мӗскӗн ӗмӗрӳ, çӗре кӗнӗ поэт,
Чуна пăчăртаса ялан аса килет.

1921 çул.

## ПУРНĂÇПА ВИЛĚМ

Ушкăн ушкăн шур пĕлĕт иртет...
Тăлăх хирте каç пулса килет.
Курăксене тайса çил вĕрет,
Çĕр çумĕпе тусан вĕçтерет...

Хирте пĕр тĕмеске пĕр пĕччен...
Тăпри çине пуснă вĕлтĕрен.
Вилнĕ çын тăпри вăл çак тăпра,
Ырă çынни вилнĕ вăрçăра.
Ĕç ачи вăл. Çĕнĕ пурнăçа
Сыхласа вилнĕ вăл çапăçса.
Чухăнсемшĕн хăйĕн кунçулне,
Çамрăк ĕмĕрне вăл хĕрхенмен;
Коммунизм Хĕрлĕ ялавне
Чун тухиччен çĕре ӳкермен.

Çывăр, тăван, иртрĕ ĕмĕрӳ,
Вăхăтсăрах сан тухрĕ чуну.
Анчах çăмăл пултăрччĕ тăпру.
Канлĕ пултăр нӳрĕ вырăну!..

Мĕскĕн тăван, сан чуну тухсан,
Никамăн та куççулĕ юхман.
Санăн куçна арăму хупман,
Аннӳ масар çине ăсатман.
Ютри сынсем сана аякка
Пытарайнă çакă шăтăка.

Тăванăмçăм, вăрансам, вăран!
Çак вăхăтсăр йăвăр ăйăхран:
Килте çамрăк арăму кĕтет;
Ачу: атте хăçан килет? тет.

Эх, тăванăм, иртнĕ кунçула
Кам таврăнса парĕ каялла?
Уя ака тумашкăн тухсан,
Юрру илтĕнес çук ĕнтĕ сан;
Тек кураймăн пĕлĕт çуттине;
Илтеес çук тăри юррине;
Кăчăрт-кăчăрт тырă вырнă чух
Санăн аллу çурла тытас çук...

Çĕр иртет те... килет çутă ир...
Анчах ĕмĕр пĕччен тăлăх хир.
Вĕлтĕрене тайса çил вĕрет,
Вилнисене асăнса йĕрет...

**Касак-касси, 1920 çул.**

## ЧĂВАШ АРĂМНЕ

Хура шур анчах курмашкăн
Кам çуралса ӳснĕ?
Çут тĕнчере йăвăр хурлăх
Кам ытларах тӳснĕ?
Çут тĕнчере кам телейĕ
Çĕре ӳксе юлнă?
Авалтанпах кам кунçулĕ
Тарçăри пек пулнă?
—Камăн вăл?—кунçулĕ йăвăр,
Хурлăхлă кунçулĕ? . . .
—Чăваш арăмĕн пулмасăр
Камăн тата пулĕ?
Чăваш арăмне асапшăн
Ашшĕ-амĕш çуратнă,
Ачаранпах хурлăх чулĕ
Мăйĕ çине çакнă.
Хурт-кăпшанкă та çу кунĕ
Савăнса вĕçетчĕ,—
Çут-çанталăкшăн, хĕвелшĕн
Вăл та хĕпĕртетчĕ.

Сан чĕрӳ анчах хĕн витĕр
    Савăнăç пĕлместчĕ,
Вучах умĕнчех вăрахăн
    Ĕмĕрӳ иртетчĕ.
Турчка-мĕлкерен урăх
    Нимĕн те курман эс,
Çут тĕнче кума тухмашкăн
    Ирĕклĕх пулман сан.
„Хĕрарăмăн çӳçĕ вăрăм—
    Ăсĕ кĕске“—тетчĕç,
Уншăн çут тĕнче курмашкăн
    Мĕне кирлĕ?—тетчĕç.
Кил-тĕрĕш тирпейлесессĕн,
    Тата ĕне, сурăх
Пăхса усрама пĕвсессĕн
    Мĕне кирлĕ урăх?!
Çапла ерипенех санăн
    Вăюсем пĕтетчĕç.
Масар çине, чу тухсассăн,
    Каяйса чикетчĕç.
Сан çине вара хурлăхлăн
    Çил анчах вĕретчĕ,
Усăсăр иртнĕ кунçулшăн
    Шăхăрса йĕретчĕ . . .
Иртнĕ çулсенче çаплаччĕ
    Хĕрарăм кунçулĕ . . .
Малашне тек ан тăкăнтăр
    Мĕскĕн чун куççулĕ.
Чăваш сынни те халь ĕнтĕ

Хăй пуçне çěклерě,
Чăваш çěршывне юратрě:
„Эпě те çын“,—терě.
Чăваш арăмě, саншăн та
Хурлăх хыçа юлтăр.
Пулас пурнăçу мăшкăлсăр,—
Савăнăçлă пултăр.
Хěрарăмсем, эсир те халь
Этем шутне кěрěр,
Вучах умěнчех ан ирттěр,
Текех сирěн ěмěр.
Ěмěр чура пулса çитě,
Чура пулма намăс!...
Ирěклě кунçул тумашкăн
Тăрăр пурте харăс!...
Ачăрсене вěрентме те
Эсир ан ўркенěр,
Чăваш çěрне юратмашкăн
Вěсене вěрентěр.
Ачăрсем чăваш чěлхишěн
Тăма хатěр пулччăр,
Тек нимрен те ěлěкхин пек
Чăвашран ан кулччăр.
Çитě! Шăпăр шăтăкěнчен
Çут тěнчене тухăр!
Этем чунне—выльăх чунě
Вырăнне ан хурăр.

**1920 çул. Шупашкар.**

## ИРТНĔ САМАНА

Мĕскĕн юлташăм, хăта,
Сухапуç сынни,
Иртсе кайнă вăхăта
Астăватăн-и?
Старшинапа тиеке,
Е пупа курсан,
Хываттăмăр çĕлĕке
Çурă çухрăмран.
Сарлака та пысăкчĕ
Çĕр, тĕнче тавра,—
Санăн ану хĕсĕкчĕ
Сарлака уйра.
Чул çуртсемччĕ улпутсен,
Пурнăç—хĕпĕртÿ,
Сан тайăлнă—çĕрнĕрен
Аслаçу пÿртÿ.
Ăна, сивĕ хĕл ларсан,
Юр шăлса каять;

Тăррине, çулла пулсан,
Армути шăтать.
Кĕтессенче улласа,
Çил вĕрсе вылять...
Кăмакара выçăхса
Ачу-пăчу выртать.
Эсĕ йĕнĕ вăхăтра,
Питĕ сивĕре,—
Пуянсенĕн ĕçкĕре
Юхать пыл-сăра.
Сана пуян ĕçкинче
Пĕр курка тивмест,—
Арăму ун патĕнче
Канмасăр ĕçлет...
Аса ил-ха, пĕр çулне,
Шăнкăртаттарса,
Килчĕ-кĕчĕ сан килне
Кантур йăтăнса.
Куланайшăн ĕнӳне
Кайрĕ вăл тытса,—
Ылханайрăн вĕсене
Питĕ хурланса.
Пӳрте кĕтĕн—ачу-пчу
Выçă макăрать,
Сăпкара та пĕр ачу
Вилес пек выртать.
Вĕсем валли малалла
Мĕскер ырри пур?—
Вĕсемшĕнех пулмалла

Пĕтĕм хура-шур . . .
Асту-ха тата каллах—
Выçлăх пулнă кĕр
Ыйтрăр халăхпала
Ирĕклĕхпе çĕр.—
Вĕçсе килчĕç казаксем
Çавă вăхăтра . . .
Виç кун юнлă вилесем
Выртрĕç урамра . . .
Мĕскĕн юлташăм, çакна
Астуса ил те,
Ĕлĕкхи саманана:
„Тĕп пултăр çав!“—те.
Ватă аслаçу пӳртне
Йăвантарса яр,
Ĕмĕрлĕх никĕс çине
Çĕнĕ çурт лартар!
Пур чухăнсем тĕнчипе
Вăл çурта тăвар;
Йăлтăр хĕвел çуттипе
Тăррине тăрлар!
Вăхăт çитĕ, вăхăт пулĕ—
Çĕн йĕрке килсен,
Юхмĕ! юхмĕ тек куççулĕ
Пурнăç хĕсĕкрен!
Çĕнĕ пурăнăç хĕвелĕ
Çунĕ çутатса!

**Хусан. 1919 çул.**

## ИЛИ! ИЛИ! ЛИМА ÇАВАХВАНИ!..

Или! Или! Лима савахвани!..*)  
. . . . . . . . . . . . . .  
Пăталарĕç тăван çĕршыва.  
Эп,—ăна виличчен саваканĕ,  
Çăлăнăç патнелле йĕр хывап.

---

* Евангелирен илнĕ авалхи грек сăмахĕ. Ăна хĕрес çумне пăталанă Христос хăй вилес умĕн калана пулать. Чăвашла вăл: „Турăçăм! Турăçăм! Мĕншĕн мана пăрахрăн!..“ тени пулать. Поэт ку сăвăра революцичченхи чăваш халăхĕн вилме сунна пурнăçне хĕрес çине пăталанă Христоспа танлаштарать. (Хĕрес çумне пăталаса вĕлересси мăшкăллă вилĕм вырăнне шутланнă). Ун пек Евангелири е Библири паллă сăмахсемпе паллă сăнлăхсене илсе усă курасси ĕлĕкхи поэтсен йăлинче час-часах пулкаланă. Çеçпĕл Мишши те ку сăвăра çав традицие илсе çырнă.— *Редакци.*

Пуш хирте пĕр пĕччен ун хĕресĕ,
Хăйăра сăрханать чĕрĕ юн.
Ăна йӳçĕ эрех ĕçтерессĕ,
Хупăнать, хупăнать куçĕ ун.

Таврара хурахсем ахăраççĕ,
Тӳресем кăмăллăн кулкалаç.
Çаруранлă çĕршыв макăрать-çке,
Ун çине витĕнет тĕттĕм каç.

Ĕмĕрлĕх, юлашки каç пекех-çке,
Ĕмĕрех пăрахас пек хĕвел.
Кăлкансем ахлатса пуç пĕкеççĕ,
Вĕсене те—мĕскĕн çĕршыв шел.

Янк уяр кĕрхи каç çĕр чĕтрерĕ,
Çӳлтен мар, çĕртенех пĕр мăн сас:
—Эй, эсир, выççисем, итлĕр!—терĕ,—
Итлĕр, кам пурăнмашкăн хавас!..

Ман çĕршыв хĕресне аça çапрĕ,
Куçне уçрĕ çĕршывăм,—пăхать:
Хăй пекех мĕскĕнсен йышлă çарĕ
Ун патне юрласа çывхарать.

Çитмĕл çич чĕлхепе саламлаççĕ,
Ыталаç, чуптăваç пĕр-пĕрне.
Сӳтĕл, татăл, асап саламачĕ,—
Чура мар эпир тек ĕмĕрне!..

---

## ЭПӖ ВИЛСЕН

Эп вилсен—мана пытарӑр
Ҫӳллӗ ту тӑрне,
Йӑмрасем лартса хӑварӑр
Ман тӑпра ҫине.

Ман ҫинчен пӗтӗм ҫӗршывӑм
Курӑнтӑр вара,
Тӑпрам ҫинчен курма пултӑр
Ват Шупашкара.

Эпӗ выртӑп... выртӑп... юлӗ
Вӑхӑт каялла;
Чӑваш чӗлхи пурнӑҫ майӗ
Кайӗ малалла.

Вӑхӑт ҫитӗ—чӑваш ҫӗрӗн
Кӑмӑллӑ чӗлхи
Чаплӑ пулӗ,—вӑлах пулӗ
Ҫамрӑк чун пахи:

Пулĕç ĕмĕрлĕх илемлĕ
    Сăвă-юрăсем,
Пулĕç аслă, çивĕч ăслă
    Кĕнекеçĕсем.

Савнă çĕршывăмăн пулĕç
    Чаплă сăвăçсем,
Чаплă та илемлĕ çырĕç
    Ун чухне вĕсем.

—Чăваш сыннин чĕлхи чухăн,
    Теме хăякан
Пулĕ-ши ун чух, пĕлесчĕ,
    Кураясчĕ ман!

Тусăмсем! Ун чух çул майĕ,
    Ман çине пырса,
Юрă юрласа кăтартăр,—
    Сăвă каласа.

Ун чухне ман пĕлес килĕ
    Сăвăçсен ятне,
Тата—вĕсенчен хăш аслă,
    Хăшĕ чаплине.

Юрăсемпе эсир мухтăр
    Сăвăçсен ятне,
Хытă сасăсемпе юрлăр
    Вĕсен сăввине.

Вара эпĕ хамах пĕлĕп
    Сăвăçсен ятне;
Пĕлĕп: чăваш çырулăхĕ
    Епле чаплине.

Чăвашра çĕнĕрен сăвăç
    Çуралмассерен,—
Ман тăпра çине сар-кайăк
    Пытăр ир çинчен,

Йăмрасем çине ларайтăр
    Хĕвел ăшшине,
Янра юрăпа мухтатăр
    Чăваш чĕлхине.

Тăван çĕршыв çырулăхĕн
    Илемĕ çинчен,
Çамрăксем тăван чĕлхешĕн
    Тăрăшни çинчен

Сар-кайăк юрласа патăр
    Йăмра тăрринчен . . .
Йăлтăр-хĕвел йăлтăртаттăр
    Çут пĕлĕт çинчен.

Симĕс курăкпа тумлантăр
    Ман тăлăх тăпра;
Хĕрлĕ чечексем ешерччĕр
    Ман вырăн тавра . . .

Çĕршывăма тăван халăх
Хавасламасан,
Чун савнă чăваш чĕлхийĕ
Пĕтмелле пулсан,—

Усал курăк та ан шăттăр
Ман тăпра çине:
Çĕр çурăлтăр, çĕр çăттăр
Вил шăммăмсене.

Канаш, 1921 ç.

## ХУРĂÇ ШАНЧĂК

Çĕршывăм хăюллăн вăранĕ,
Тапранĕ Кăвар-кайăкла:
Çук-çук текен улталанĕ,
Кам: çук, тет, ун чунĕ—чăлах.

Унччен-ха—айван пек çĕршывăм,
Унччен-ха—чăваш ыйăхлать.
Антив, тем пулсан та, вăл вăйлăн—
Паян чĕрĕлсе тăрасла . . .

Хĕвелĕн кăварлă хĕлхемĕ
Çĕре чечекленĕ чухне
Кам курнă çанталăк илемĕ
Пăрпа пăрланса шăннине?

Антив, хĕл шăнтса пăчăртатăр
Ăш еншĕн сикен чĕрене,
Хăюллă куçпа палăртатпăр
Çĕн кун вутланса килнине.

Чĕрем, сик хăюллăн, хавассăн,
Хăюллăх юрри кĕвĕле—
Чăваш чĕрĕлнине курмалла сан,
Ăна тĕл пулса илмелле . . .

Курап: чĕрĕлет чăваш ячĕ,
Таçта аслатиллĕ саспа
Юратнă çĕршывăн хăвачĕ
Часрах вăранасшăн тапать . . .

Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,
Çĕршывăн хастар ачисем,
Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр,—
Ан юлăр кунçул уттинчен.

Çĕршывăн пит-куçĕ çĕнелĕ,
Ыран-и, паян-и вăл?—Час . . .
Кам:—çук, тет, çав—суеç чĕлхеллĕ;
Кам:—мар, тет, çав—суккăр, чапрас.

Ыран-и, паян-и . . . тĕреклĕн
Вутланĕ çĕршывăм чĕри,
Кăварлă чечеклĕн чечеклĕ
Çĕре çĕн хĕвелĕн юрри.

Çĕршывăм хĕвеллĕн çуталĕ,—
Тапранĕ Кăвар-кайăкла.
Кам хирĕç калаçĕ,—улталĕ,
Кам:—мар, тет, ун чунĕ—чăлах.

Кейĕ хули, сентябрĕн 20 мĕшĕ, 1921 ç.

* * *

Шăршлă каç йывăрри,
Кивĕ çĕр кăкăрри
Вут хыпса, кĕл пулса вĕçтĕри.

Çĕр çунса çĕнелсен,
Çĕр çине мал енчен
Çĕнĕ сăн çиçĕмле çиттĕри.

Çĕнĕ сăн йăлтăрри,
Ун кăвар çăмăрри
Чĕрере Вут Сăмах чĕрттĕри.

Шупашкарăн варри
Çиçĕм çутлăн вĕри—
Çĕн сăмах вуччахи пултăри.

Çĕн тĕнчен кăварне,
Çĕнĕ сăн çуттине
Тĕллесе пăхайман куççене—

Çĕнĕ сăн кăварри,
Çĕн хĕвелĕн ури
Пĕр чиксе шăтарса илтĕри.

Камăн нишлĕ чĕри,
Пур нишли, халсăрри—
Ленчĕрти шапасем пулччĕри.

Эй! Шевле, Сар Шевле,
Çĕр çине çул тĕрле,—
Çул çине ярапан сар силле.

Çав çулпа мал енчен,
Çĕн тĕнче умĕнчен,
Çĕнĕ сăн ав килет инçĕтрен.

Эй, вĕре, вутлă юн!
Эй, Çĕн Кун, Йăлтăр Кун,
Кив çĕре çунтарса—çун! çун! çун!

**Утăн 26-мĕшĕ, 1921 çул.**

* * *

Инçе çинçе уйра уяр
Карталанса чăлтăртатать,
Енчен енне çапса чупать...
Çук, уяр мар, çут уйра мар—
Ман çамрăк чунлă чĕрере
Хĕвел хĕлхемлĕ хĕлĕхсем
Çитмĕл çич чĕлĕхлĕн янраççĕ...
Ман чун вылять? Е сар хĕре
Курса киленчĕç куçăмсем,
Е пĕлĕтсем чуна саваççĕ?
Çук, çук . . .
Çĕршывăм чĕрелет!
Пĕчик пӳртсемлĕ ялсенче,
Чăваш çĕрә урлă—уйсенче

Çĕн Сывлăш чун уçса вĕрет.
Çĕн Çул! Кунçул! Çĕн кун килет...

Çавна кура кĕвĕллĕ чун—
Кĕсле кĕввиллĕ вутлă юн.
Ман чĕрере уяр ури,
Хĕвел ури, хĕвел юрри,
Тăрри юрри! Шевле сарри!
Çĕн сывлăш, вĕр!
çĕн сывлăш, вĕр!
Чăваш çĕрне тĕреклĕх кĕрт.
Çĕн сывлăш, вĕр. Çĕн вăй пар!
Чăваш чĕри пултăр кăвар!
Чĕре, выля, çĕн юрă пар!
Инçе çинçе уйра уяр.
Тымарсенче хĕвеллĕн çун,—
Хĕвеллĕн çун, кăварлă юн!

Кăвар чĕрем—пин çын чĕри.
Эп пĕр çын мар—эп хам пин-пин,
Эп пин чăваш, эп пин-пин çын!
Чĕрем юрри—пин çын юрри!

**Евпатория, июнĕн 12-мĕшĕ, 1921 ç.**

# ТИНĔСЕ

Вĕçсĕр-хĕрсĕр тинĕсĕм,
Хуп-хуран, сип-симĕсĕн,
Кăпăк тумлăн, хумлăн, хумлăн
Çырана çапса, хăюллăн
Хумлă сулнăксемпе сулăн,
Хумлă кăпăкпа вĕре.
Ман çунатлă вутлă чунăм,
Çĕн çĕре чĕнен чĕре
Кĕрешӳ вăйне анчах
Кăмăллать çак тĕнчере.
Тинĕс, тинĕс, вăйлăрах
Хыççăн-хыççăн хум пăрах,
Тамăк вутлăн, тамăк çутлăн,
Вут кăварлăн, хар-хаяррăн
Тайăн-тайăн, çырăн-варăн
Хутлă хумлăн сулăн-уткăн.
Кĕрешӳ сассипеле—
Вăйлă мĕкĕрлеш саспа
Йăвăр пĕлтсене силле,
Хумсене çапа-çапа

Чуллă çырана тапрат,
Хулăм чулсене ташлат.
Тинĕс, тинĕс,—умăнта
Çĕн чăвашăн çĕн поэчĕ;
Авалхи кунсен ĕречĕ
Ун чунне тапта-тапта,
Ун чунне—чĕри тĕпне
Хурлăхлăх юрри хăварнă.
Тинĕс, тинĕс, эс хаяррăн
Сăвăçăн юнне-чунне
Вăйлă хумлă юрăпа,
Кĕрешме чĕнен саспа
Нишлĕлĕхсенчен тасат.
Вăйлă паттăрлăх, хăват
Вырнаçтар ун чĕрине.
Чунĕ ун хăюллă пултăр,
Тинĕс вăйĕпеле тултăр.
Савтăр паттăрлăх вăйне;
Çĕн куна, çĕн тĕнчене
Юратса çĕн юрă хутăр,
Кĕрешӳ ĕçне-вăйне
Хăй чĕрин хĕвелĕ тутăр.
Çĕн поэт ака та тутăр,
Утă çултăр,
Вутă çуртăр,
Ĕçлесе çĕн юрă хутăр,
Туй пулсан,—ташлатăр, култăр...
Тинĕс, тинĕс, вăл санран
(Вăхăт çитĕ) уйăрлсан,

Савнă çĕршывне кайсассăн,
Йăвăр тимĕр сăнчăртан
Хăтăлнă чăвашсене
Паттăр та, хăватлă саслăн,
Чĕрипе çунса, хавассăн,
Çĕн тĕнчен çĕн пурнăçне,
Çĕн кунне, çĕн кунçулне,
Çĕнĕ пурнăç хĕвелне
Юратса тăма калатăр.
Лăпкă халăх—пултăр паттăр.
Вăл йăваш—йăвашлăх çĕттĕр,
Чун—кăвар çунатлăн вĕçтĕр
Кив çĕртен çĕн çул çине.
Тинĕс, тинĕс, вăйлăраххăн,
Хăвăртраххăн, çăмăлраххăн,
Чул пулсан—хăватлăраххăн,
Хыççăн, хыççăн хум-хумла!
Эс хăюллăн, вăйлă хумлăн,
Йăвăр саслă, йăвăр чўллăн,
Чуллă çырана тулла.
Мĕкĕр, ахăр, кар-карла,
Вăйлă çулăмлăн, хăюллăн,
Хыççăн-хыççăн хум пăрах.
Кĕрешў вăйне анчах
Кăмăллать ман вутлă чунăм . . .

. . . . . . . . . . . . . . .

Çĕн тĕнче! Эй, çĕнĕ кунăм,
Каялла ан кай, ан чак!

**Крым, утă уйăхĕн 12-мĕшĕ.**

* *
*

Хĕрлĕ-хĕрлĕ, хĕрлĕ мăкăньсем,
Виçĕмçул чечеклĕн чĕрĕлнисем,
Çил çилленчĕ, çил вĕçтерчĕ-çке сире,—
Хăйăр хĕртрĕ çеп-çемçе çĕре.

Чĕлтĕрти çеçкеллĕ мăкăньсем,
Виçĕм çул чечеклĕ чĕрĕлнисем!
Эпĕ сирĕн хуçăр--инçетре
Выçăхса сĕтĕрĕнсе çӳреп.

Хĕрлĕ-хĕрлĕ мăкăньсене асăнса,
Хĕрлĕ мăкăньсемшĕн хуйхăрса.
Йăлпер хĕрлĕ тăрлă мăкăньсем,—
Виçĕм çул чечеклĕн чĕрĕлнисем,

Çут хĕвеллĕ кăнтăрла ăшши
Каллех çавăрăнса килĕ-ши?
Симĕс çитлĕ çимĕç пахчара
Кĕтсе илейĕр-ши хуçăра?

Хĕрлĕ-хĕрлĕ, хĕрлĕ мăкăньсем,—
Виçĕм çул чечеклĕн чĕрĕлнисем,
Çил çилленчĕ, çил вĕçтерчĕ-çке сире,—
Хуçăр выçă çӳрет инçетре.

20 /III-22, Чернигов хули.

* * *

Ёнер йывăç пахчи кăмăлне
Кун-каçах туй турĕ çуркунне.

Ир иртенпех чечек пахчинче
Чĕрĕлсе çĕкленчĕ сар чечек.

Çамрăк хурăн тураттин çинче
Саркайăк тĕрлерĕ каçчен.

Паян шыв-юр чечек пахчинче, —
Юр айĕнче хĕрлĕ сар чечек.

Сар кайăк çук хурăн тăрринче,
Сар кайăкăм шур юр айĕнче.

9/IV—22, ст. Врaборы, Черн. губ.

# АКА ÇИНЧЕ

Кăвак-çут кăваккăн, кăвак кантăк витĕр
Сарă сĕтел урлă урайне ӳксен,
Атте: „тăрах“ – терĕ, йăхран вăрантăм,
Карăнса эп тăтăм ăш тӳшек çинчен.

Кăвак кантăк витĕр урамалла пăхрăм:
Çӳлте кăвак пĕлĕтсем чупаççĕ.
Хăвăрт сиксе тăтăм, тумлантăм та тухрăм,
Çăл шывпе пит çурăм. Уçăлчĕ пит-куç.

Аттесем кĕлетре тыр вăрлăх тиеççĕ,
Эпĕ те тытса кӳлтĕм акапуç,
Акă аттепе тухса кайрăмăр акана,
Кăриклатса юлчĕ вырăсла хапха . . .

Пĕр тĕле çитсессĕн кăвак кантăк витĕр
Савнă сар хĕр пăхрĕ, йăл кулчĕ.
Чĕре хăвăрт сикрĕ, çиртсе каяс пулчĕ.
Савни кантăк витĕр çаплах пăхса юлчĕ.

---

ТУПМАЛЛИ: *Стр.*

Хӗвеллӗ вурнӑҫ юрӑҫи—*Ухсай Яккӑвӗ* статьи . 3
Вӑхӑт ҫитӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . 31
Ҫӗн Кун аки . . . . . . . . . . . . . . . 33
Катаран кас килсен . . . . . . . . . . . . . 35
Чӑваш чӗлхи . . . . . . . . . . . . . . 37
Чӑн чӗрӗлнӗ . . . . . . . . . . . . . . 39
Пуласси . . . . . . . . . . . .
Чӑваш ачине . . . . . . . . .
Чӑваш поэтне Ахаха асӑнса .
Пурнӑҫпа вилӗм . . . . .
Чӑваш арӑмне . . . .
Иртнӗ самана . . .
Или! Или! Лима с
Эпӗ вилсен . .
Хурӑҫ шан
Шӑршлӑ к
Ивҫе ҫинҫ
Тинӗсе .
Хӗрлӗ-хӗрл
Ӗнер йывӑ
Ака ҫинче

редактор Я. Уксай


ь Ф. Яков
5/XI
раж 3000 экз
Заказ № 477
осадского

Цена 2 руб.

СЕСПЕЛЬ МИШИ

СТИХИ

на чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР

1939